Аслă Çĕнтерў тунăранпа 65 çул çитнĕ май

«Аслă паттăрлăх страницисем»

Майăн 9-мĕшĕ – Аслă Çĕнтерў кунĕ – пĕтĕм халăх уявĕ пулса тăрать. Çавна халалласа Муркашри ача-пăча библиотекинче «Аслă паттăрлăх страницисем» ятпа выставка йĕркеленĕ. Выставкăра Аслă Отечественнăй вăрçă, халăхăн фронтри тата тылри паттăрлăхĕ, полководецсемпе çар пуçлăхĕсен пурнăç çулĕ пирки, пирĕн ентешсем çинчен литература пуян.

Выставка 8 пайран тăрать. Кашни пайрах вăрçăн чи йывăр тапхăрĕсем пирки каласа панă: вăрçă пуçланни, Мускавăн пынă çапăçусем, Ленинград блокади, Сталинград патĕнче пынă çапăçусем, Курск пĕкки. Выставка «Вĕсен паттăрлăхĕ вилĕмсĕр» пайпа вĕçленет. Унта пирĕн ентешсем – Совет Союзĕн Геройĕсем пирки каласа панă.

Кĕнекесемсĕр пуçне выставкăра библиотекарьсем хатĕрленĕ буклетсене, брошюрăсене, памяткăсене те вырнаçтарнă. «Муркаш районĕнче çуралса ўснисем – Совет Союзĕн Геройĕсем» буклетра Аслă Отечественнăй вăрçăра паттăрлăх кăтартса Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ пирĕн район çыннисем пирки информаци пур.

Кунпа пĕрлех выставкăра вулакансем фронтран янă çырусемпе те паллашма пултараççĕ. Фронтовиксем вĕсенче çапăçу хирĕсенчи лару-тăрупа паллаштараççĕ, хăйсен ентешĕсен тылри пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ пирки ыйтса пĕлеççĕ. Çак виç кĕтеслĕ çырусем пĕрисене те, теприсене те Тăван çĕршывăн паттăрлăх кăтартма май панă.

Выставкăна тăратнă пур материалсем те пире вĕсем пирки шухăшлама, çĕр çинче мĕн пулни-иртнине асăмра типтерлĕн упрама хистеççĕ. Çакă вăл пулас ăрусемшĕн те кирлĕ. Выставкăна йĕркелени çамрăксене патриотла воспитани парас тĕлĕшпе те пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатпăр.

Çавна та каласа хăварасшăн. Асăннă выставкăна йĕркелени – Аслă Çĕнтерўпе çыхăннă мероприятисенчен пĕри кăна. Пирĕн патра кун пек мероприятисем тăтăшах иртеççĕ.

Марина СКВОРЦОВА,
ача-пăча библиотекин методисчĕ.
Сăн ўкерчĕкре: ачасем выставкăпа паллашаççĕ.

Палăксене твĕçлипе пăхса тăмалла

Муркаш районĕн территорийĕнче Аслă Отечественнăй вăрçăна тата ытти çапăçусене халаллана 45 палăк тата 7 обелиск шутланать. Вĕсенчен 50-шĕ муниципаллă харпăрлăхра шутланаççĕ, 26 асăну сооруженине 2009 çулта муниципаллă харпăрлăха куçарнă. Çулленех палăксем умĕнче ятарлă караулсем тăратса митингсем ирттересси йăлана кĕнĕ. Кусем вĕсем майăн 9-мĕшĕнчи Аслă Çĕнтерў кунĕ, июнĕн 22-мĕшĕнчи Асăнупа хурлăх кунĕ. Ун чухне унта чечексемпе чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Çулленех çемье чăмăртакансем палăксем умне чечексем хураççĕ. Катькас ял тăрăхĕнчи Шомик ялĕнче майăн 9-мĕшне уявласси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Палăксене пăхса тăрассине çирĕп тĕрĕслесе тăраççĕ. Ку ĕçе культура ĕçченĕсене, ял тăрăхĕн депутачĕсене, обществăлла организацисене те хутшăнтараççĕ.

Шкулсем палăксене шефа илнĕ. Бюджетри тата бюджетпа пăхса хуман укçа-тенкĕпе палăксене юсаççĕ, ытти ĕçсене пурнăçлаççĕ. Палăксем çывăхĕнчи территорисене йĕркене кĕртессипе сахал мар ĕç пурнăçланă: йĕри-тавра карта тытса çавăрнă, территорисене тирпей-илем кĕртнĕ, палăксем патне пымалли çулсене тунă, çулленех кунта чечексем лартса чĕртеççĕ.

2009 çулта юсав ĕçĕсене туса ирттерме вырăнти бюджетран 62,2 пин тенкĕ тăкаклана. 2010 çулта вара 7 палăка юсама, çавна валли 84 пин тенкĕ уйăрма пăхса хунă. Апрель уйăхĕнче ку ĕçсем вĕçленмелле.

Палăксене сыхласа-упраса тăнипе пĕрлех çĕнĕ палăксем çĕклессипе те ĕçсем анлă сарăлнă. 2008 çулта Муркаш ялĕнчи Çĕнтерў паркĕнче Геройсен аллейине йĕркеленĕ, ăна Совет Союзĕн 5 Геройне халаллана. Кусем вĕсем Г.А. Алексеев, Я.А. Анисимов, Б.М. Васильев, А.И. Воробьев, И.Г. Мешаков тата Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ А.А. Быков. Вĕсен ячĕсене Муркаш районĕн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ, свидетельствисене вара савăнăçлă лару-тăрура тăванĕсене панă.

2008 çулта обелисксем Оринин ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси ялĕнче тата Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Сосновкăри вĕрентўпе культура центрĕн территорийĕнче вырнаçтарнă. Вăрçăра вилнисене асăнса лартнă палăксене реставрацилес ĕçсене те туса ирттернĕ.

2009 çулта Якаткасси ялĕнче ял çыннисен вăйĕпе ялти вилнĕ çынсене асăнса аллея, обелиск йĕркеленĕ. Ăна 2010 çулхи майăн 8-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçма палăртнă.

Сăмах май, Аслă Çĕнтерў тунăранпа 65 çул çитнĕ май пур ял тăрăхĕсенче те палăксене юсас ĕçсем анлă сарăлнă. **(Хамăр инф).**

Пенси ыйтăвĕсемпе

Пенсионерсен тупăшсем ўсрĕç

Апрель уйăхĕнчен тытăнса социаллă хушма тўлев илсе тăракан пенсионерсен 20 проценчĕн тупăшĕ республикăри пурăнма кирлĕ минимумран иртрĕ. Пенсисен шайне ўстернĕ май Чăваш Енри татах 6 пин пенсионер чухăнлăх виçи урлă каçрĕ.

Çавна палăртмалла. Социаллă хушма тўлеве ĕçлемен пенсионерсене параççĕ. Ăна илме Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2010 çул валли пенсионерсем тĕлĕшпе палăртнă тупăш пурăнма кирлĕ минимумран (3910 тенкĕпе танлашать) каярах пулмалла. Пенсионерăн тупăшĕ шутне пенси виçине кăна мар, уйăхсерен тўлесе тăракан ытти тўлевсене те кĕртеççĕ. Вăл шутра телефонпа усă курнăшăн, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн компенсаци пани т. ыт. те. Социаллă хушма тўлевĕн калăпăшĕ мĕн чухлĕ пуласси республикăри пурăнма кирлĕ минимумпа пенсионерăн тупăшĕн шайлашулăхĕ мĕнле суммăпа танлашнинчен килет.

2010 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса Чăваш Республикинче социаллă хушма тўлеве заявленисем çырмасăрах ĕçлемен 30,4 пин пенсионера тўлесе тăма тытăннă. Муркаш районĕпе ку хисеп 1149 çынпа танлашать. Пĕтĕмĕшле илсен, кунта çемьери тăрантаракана çухатнипе пенси, социаллă пенси илсе тăракансем, çавăн пекех ватлăха пула пенси илсе тăракан тыл ĕçченĕсем тата ĕç ветеранĕсем шутланман çынсем кĕреççĕ. Социаллă хушма тўлевĕн виçи 790 тенкĕпе, пирĕн районпа 795 тенкĕпе танлашать.

2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пур йышши пенсисен виçисем те ўснĕ май, кунпа пĕрлех федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансенне уйăхсерен укçан тўлесе тăракан тўлевĕсене тата соцпакет виçине индексациленĕ май, социаллă хушма тўлевĕн виçине çĕнĕрен пăхса тухнă. Çапла вара Чăваш Республикипе социаллă хушма тўлевĕн виçи 39 тенкĕ чакрĕ, 751 тенкĕпе танлашрĕ. Тупăш ўснĕ май, республикипе 6 пин пенсионера, районĕпе 295 çынна тупăш ўснĕ пирки тата ĕçе вырнаçнă май социаллă хушма тўлеве тўлеме пăрахнă.

Çапла вара Чăваш Республикинче апрель уйăхĕнчен тытăнса ĕçлемен 24,4 пин пенсионер пенсипе пĕрле социаллă хушма тўлев илме тытăнать. Социаллă хушма тўлев валли уйăхсерен уйăракан укçа сумми 18,4 миллион тенкĕпе танлашать.

Е. АЛЕКСАНДРОВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтереççĕ

Пăшалпа асăхануллă пулмалла

Хальхи вăхăтра районта сунар пăшалĕ е ытти тĕрлĕ пăшал тытакансем сахалах мар. Анчах та нумайăшĕ ăна тытса усрамалли йĕркесене пăхăнмасть. Çавна май республикăра пăшал вăрланă, çухатнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Кăçалхи январь–февраль уйăхĕсенче кăна кун пек фактсене Шупашкарта, Вăрнар районĕнче тупса палăртнă.

Тишкерў кăтартса панă тăрăх, çак преступленисене тума май паракан сăлтав вăл – гражданла пăшал хуçисен централизациленĕ сыхлав системисем пулманни. Çавна май ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме тивет, пăшал хуçисен ведомствăлла мар хурал подразделенийĕсемпе пĕрле çак ыйтăва татса парас пулать.

Т. ТЕРЕНТЬЕВА,
районти шалти ĕçсен пайĕн лицензипе ирĕк парассин ĕçĕсен инспекторĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

«Çамрăклăх» ярăмран
1980-мĕш çулсем

Купăса хуллен тăсатăп, ĕнеретĕп кĕввине,
Иртнине аса илетĕп, асилетĕп савнине.
Юрату пур пек туяттăм, çунатланнă ĕмĕтпе
Юнашар хуллен утаттăм савнипе.
Çăл куç пек тапма пуçларĕ манăн туйăм чĕрере,
Анчах чунăм çеç туймарĕ, ăнланмарĕ-çке хĕре.
Чечексем куллен çĕклерĕм тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслине,
Юратса тек ыталарăм савнине.
Кичемленчĕ ак тавралăх, кĕрхи вăрăм каçĕсем.
Вăхăт иртрĕ-çке туймалăх, çук тек ăшă сăмахсем,
Тунсăхпа çунса çўретĕп юлнă аса илўсемпе,
Тек утмастăп, тек утмастăп савнипе.

Унăн куçĕсем – утмăл туратсем,
Çепĕç аллисем – чун çунтармăшсем.
Иртнĕ кунĕсем – ăшă туйăмсем,
Вăйă картисем, лăпкă каçĕсем.

П. ВОРОБЬЕВ.

Райадминистрацире

Пултаруллисене – Хисеп грамоти

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата районти ял хуçалăх производствине аталантарма пысăк тўпе хывнăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 17-мĕшĕнчи 173 № йышăнăвĕпе «Герой» пĕрлешўллĕ хуçалăхăн тĕп зоотехникне **Елизавета Ильинична ПАРГЕЕВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 19-мĕшĕнчи 186 № йышăнăвĕпе «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă акционер обществин хушма ĕçченне **Рима Изосимовна ИВАНОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Тăрăшса ĕçленĕшĕн, юридици вăйĕнчи çынсемпе уйрăм граждансен саккунлă интересĕсене хўтĕлес ĕçе тивĕçлĕ тўпе хывнăшăн район администраций�кн йĕркелўпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕн çумне **Инна Вячеславовна ВОЛКОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 22-мĕшĕнчи 195 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Александр Изосимович МИКРЯКОВА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин тĕрĕслевпе пропуск пункчĕн контролерне;

– **Герман Михайлович ПАВЛОВА**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн сĕт турттармалли автомашина водительне;

– **Геннадий Иванович ВАСИЛЬЕВА**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн ўй-хир бригадин бригадирне;

– **Зоя Константиновна ЕФИМОВАНА**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн Анаткассинчи сĕт-çу фермин выльăх пăхаканне;

– **Алексей Алексеевич МАКСИМОВА**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн Çатракассинчи сысна фермин выльăх апачĕ хатĕрлекен операторне.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 24-мĕшĕнчи 220 № йышăнăвĕпе ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин тракторист-машинистне **Алексей Петрович УГАРОВА**, çитĕнекен ăрава вĕрентессине тунă çитĕнўсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн çул çитмен ачасен «Мечта» ача сачĕ» муниципаллă вĕрентў учрежденийĕн заведующине **Галина Александровна ШОЛКОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Газ промышленноçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнчи 286 № йышăнăвĕпе «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ĕç сыхлавĕпе промышленность хăрушсăрлăхĕн ушкăнĕн ĕç сыхлавĕпе техника хăрушсăрлăхĕн инженерне **Анатолий Владимирович КАЗАМБАЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнчи 298 № йышăнăвĕпе «Ударник» хуçалăхăн бухгалтерне **Зоя Мироновна ВЛАДИМИРОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Аукцион

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

Форма торгов и наименование аукциона – открытый аукцион на право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики, предназначенного для строительства многоквартирного жилого дома.

Основание проведения аукциона – постановление главы Администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 310 от 20.04.2010 года.

Заказчик аукциона – Администрация Моргаушского района Чувашской республики

Аукцион проводит – Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия Права»

Место нахождения и почтовый адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Контактный телефон (факс) (8352) 28 29 89, +7 905 029 12 03, +7 903 065 84 68, электронная почта: garantiaprava@mail.ru

Предмет аукциона: право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики, предназначенного для строительства многоквартирного жилого дома.

Начальная (стартовая аукционная) цена: начальная (стартовая аукционная) цена арендной платы в год земельного участка определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

Перечень земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики, выставленных на торги (аукцион):

Лот №1 – земельный участок с кадастровым номером **21:17:160302:114**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для строительства многоквартирного жилого дома», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Парковая, общей площадью 2834.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 11260.00 (одиннадцать тысяч двести шестьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Срок аренды земельных участков – 3 (три) лет

Срок, место и порядок предоставления аукционной документации. Документация по аукциону предоставляется по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Срок предоставления документации: «21» апреля 2010 года по «20» мая 2010 года.

Порядок предоставления документации об аукционе: в электронном виде на основании заявления **любого** заинтересованного лица, поданного в письменной форме, в течение двух рабочих дней со дня получения соответствующего заявления, в печатной форме на основании заявления **любого** заинтересованного лица, поданного в устной форме, в день обращения. Плата за предоставление документации по аукциону не взимается.

Заявки на участие в аукционе предоставляются по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Сроки предоставления заявок: «21» апреля 2010 года по «20» мая 2010 года.

Банковские реквизиты для перечисления денежных средств обеспечения заявки на участие в аукционе:

ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права»
ИНН/КПП 2130007402/213001001
р/с 40702810300960000813 в Чебоксарском филиале ОАО «Банк Москвы»
к/с 30101810200000000767
БИК 049706767

Назначение платежа: *залоговая сумма за участие в аукционе.*

Место, дата и время проведения открытого аукциона: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, 6.

Время проведения открытого **аукциона 21 мая 2010 года 09 часов 00 минут по московскому времени.**

Директор ООО «ЮФ «Гарантия Права» ДЕНИСОВ А.И.